25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
28
ЮННКУН
252 (6187) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Комсомолăн пурнăçра çамрăксен чи ĕçчен те тӳрĕ тĕллевлĕ пайĕ пулмалла

1942 çулти октябрĕн 8-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Михаил Иванович Калинин юлташ кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче уйрăмах палăрса мала тухнă комсомолец-колхозниксене Кремльте йышăннă.

Йышăнура çавăн пекех тата комсомолăн хăшпĕр райкомĕсемпе обкомĕсен секретарĕсем те пулнă.

Питех те ăшă калаçура колхоз уйхирĕнчи стахановецсем Калинин юлташа хăйсем пысăк тухăçлă тĕштырăпа çĕрулмишĕн тата пахча-çимĕçсемшĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа панă.

Михаил Иванович хăйĕн выступленийĕнче йышăнура пулнисене отечественнăй вăрçăн хальхи вăхăтри саманчĕпе паллаштарнă тата комсомолăн ялти организацийĕсем умне черетри питех те кирлĕ задачăсене кăларса тăратнă.

Çав калаçу çинчен пĕлтерни «Комсомольская правда» хаçатăн октябрĕн 22-мĕшĕнчи номерĕнче пичетленсе тухнă. Ăна эпир чăвашла куçарса пичетлетпĕр.

Михаил Иванович Калинин тухса калани

Юлташсем!

Пирĕн государство вăрçакан вăрçă питĕ йывăр та юн тăкăнакан вăрçă. Нимĕçсем вăрçа хăйсем енче чылай государствăсене: Италине, Румынине, Финляндине, Венгрин çарĕсене туртса кĕртрĕç. Çав государствăсенчен кашни, Италисĕр пусне, хăйне уйрăм илсен пысăк мар, анчах та Европăри чылай государствăсене хирĕç пирĕн пĕччен вăрçмалла килсе тухать.

Нимĕçсем пирĕнне пысăк территори тытса илчĕç, халăх йышлăн пурăнакан вырăнсене йышăнчĕç. Нимĕçсем темиçе хутчен вăйлăн пырса çапсан пирĕн çарта аркану па пăтрану пуçланса каять тесе шухăшланă. Анчах пачах та урăхла пулса тухрĕ—Хĕрлĕ Çар уйăхран уйăха вăйлăнрах çапăçма тытăнать, унăн тăшмана хирĕç тăракан хăвачĕ ӳсее пырать. Çакăнта ĕнтĕ большевиксен партийĕ пăхса çитĕнтернĕ пирĕн çынсен чăтăмлăхĕпе вăйĕ палăрса тăрать. Пирĕнтен хăшпĕрисене пĕр ухмахла йăла ăна чăрмантарать-ха. Эпĕ аслати алтмасăр сăхсăхмаççĕ текен сăмаха асра тытатăп. Çавнашкал çынсем вĕсем нимĕç лыртан ярса тытнине курсан кăна кирлĕ пек çапăçма тытăнаççĕ.

Пирĕн çĕршыв гитлеровецсене çакăн пек вăйлă отпор парассине чикĕ лешьенче пачах та кĕтмен. Хăшĕ-пĕрисем пирĕн вăй сахал, промышленность япăх, çар вăйсăр тесе шухăшланă, нимĕçсем пире часах пусарса лартĕç, тенĕ. Пирĕн халăх нимĕç захватчикĕсене хирĕç геройла тăрса кĕрешни халĕ çавнашкал политиксене тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет.

Пирĕн правительствăпа халăх пĕтĕмĕшпех пĕр шухăшлă пулса тăнине чикĕ лешьенче сукăр çынсем кăна курма пултараймаççĕ. Нимĕçсем пысăк территори тытса илчĕç пулин те, пирĕн çĕршыв ура çине тăратнă вăйсем питех те пысăк пулчĕç. Çавăн пек вăйлă отпорпа тĕл пулассине нимĕçсем хăйсем те шухăшламан, вĕсем пире виçĕ-тăватă эрнере çĕнтерме шутланă. Вĕсем мĕнтерме йăнăш шутлани халĕ ĕнтĕ кĕретех курăнса тăрать.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар нимĕçе хирĕç пĕртаннипе пĕртанни кĕрешнĕ пек кĕрешет. Кунтан та ытларах. Нимĕçсем енче Румыни, Венгри, Итали, Финлянди çĕршывĕсем тăрса çапăçаççĕ, çав вăхăтрах ССР Союзĕ тăшмана хирĕç пĕччен кĕрешет. Техника пирĕн сахал мар, тата вăл нимĕçсеннинчен япăх мар, вĕсеннинчен лайăхрах та. Эпир хамăрăн ресурссене хăвăртраххăн маневр тума ĕçе кĕртме пултартăмăр. Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн боецсемпе командирсем нумай япаласене вĕренсе ситрĕç. Паллах, çавăн пек пысăк фронтра, вăйсăр, пултаруллăхсăр командирсем те пур. Анчах [illegible] çук, боецсемпе командирсен ытларахăшĕ хăйсен ĕçĕн [illegible] тăрать.

Çухатусем пирĕн чăн та, сахал мар, анчах нимĕçсем ытларах çухатаççĕ. Эпĕ çар çыннисенчен тĕплĕн, çине тăрса тĕпчесе ыйтса пĕлнĕ. Вĕсем пурте нимĕçсем пирĕннинчен ытларах çухатусем тӳснине çирĕплетсе параççĕ. Чăн та, йышăннă территорисем çинче нимĕçсем пирĕн гражданла халăха нумай тытса илнĕ. Анчах çакăнпа та вĕсем хăйсене валли усă тăваймаççĕ.

Вăрçă мĕнпе пĕтесси эпир малашне хирĕç тăма пултарнинчен килет. Нумай ĕçсемшĕн Сталинграда паттăррăн хӳтĕлекенсене тав тумалла. Вĕсем лайăх çапăçаççĕ тата хамăрăн тăван çĕре, хамăрăн халăх пурăнакан пунктсене чăннипе мĕнле хӳтĕлемеллин тĕслĕхне кăтартса параççĕ.

Çакна каламалла, ытти фронтсенче те, нимĕçсем наступлени тума хăтланакан вырăнсенче пур çĕрте те, вĕсене çирĕп отпор параççĕ. Эпир мĕн чухлĕ çирĕпрех пыра-пыра çапатпăр, нимĕç салтакĕсем вĕсен ютçĕршывсене тытса илес, сĕмсĕр ĕмĕчĕсем мĕнпе пĕтессине çавăн чухлĕ хăвăртрах ăнланса илĕç.

Халĕ пĕр-ик сăмах—пирĕн промышленноçри лару-тăру çинчен.

Нимĕçсем тытса илнĕ районсенчен хамăрăн предприятисене куçарса каясшине эпир лайăх пурнăçа кĕртрĕмĕр. Паллах, нимĕçсем çавăн çинчен шухăшламан. Вĕсем пирĕн заводсемпе хăйсен пушисемшĕн тӳрех усă курма тытăнмашкăн шутланă.

Эвакуациленĕ предприятисенче ĕçе йĕркелесе янă та ĕнтĕ. Пĕр сăмахпа каласан, пирĕн производство хăй питех те организованно пулнине тата хăвăрт маневрсем тума пултарнине кăтартса пачĕ. Рабочисемпе мастерсем, инженерсем, пĕтĕм техникăллă тата административллĕ персонал çак вăрçăра, тӳрех калатăп, хăйсене лайăх енчен кăтартса пачĕç, вĕсем хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр ĕçлеççĕ, ĕç тухăçлăхне кун-ран-кун ӳстерсе пыраççĕ.

Çавна май ĕнтĕ хамăрăн çара эпир техника тĕлĕшĕнчен лайăхрах хĕçпăшаллантартăмăр, кирлĕ япаласене нихçанхи пек мар лайăхрах, вăрçă пуçланиччченхинчен те лайăхрах туса патăмăр. Çакăн пекки вăл вырăс историйĕнче нихăçан та тенĕ пек пулман. Ĕлĕк, сăмахран, Россия вăрçă вăрçнă чухне унăн çарĕн нихăçан та çителĕклĕ снарядсем пулман.

Артиллери вăрçăра мĕнтери пысăк вырăн йышăнса тăнине эсир пĕлетĕр. Вăрçă çакна кăтартса парать: пирĕн артиллери çине ăмсанса кăна пăхма пултараççĕ. Пахалăх тĕлĕшĕнчен пирĕн орудисем лайăх. Вĕсене эпир вăрçăра пĕтнине улăштармалăх кăна мар туса кăларатпăр, вĕсем пирĕн запасра та кăштах пур. Танксем тĕлĕшпе те ĕç лайăхланса пырать. Мĕнпур тĕнчере пирĕн танксенчен лайăхраххисем урăх çук тесе йышăнаççĕ.

Çапла ĕнтĕ эсир куратăр, промышленность хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртрĕ. Кунта каппайса ларни пулмалла мар кăна, пирĕн предприятисен татах та лайăхрах ĕçлемелле. Пур пек майсемпе эпир пуринпе те çителĕклĕ таран усă курмастпăр-ха.

Халĕ ĕнтĕ чи йывăрри ялхуçалăхĕнчи ĕçсене татса парасси. Нимĕçсем вăхăтлăха Украинăпа Кубане тытса илчĕç. Çав территорисем таварлă тырпулчи нумайрах паратчĕç. Çавна пула ĕнтĕ тырпулшăн кĕрешес мĕнпур йывăрлăх хĕвелтухăçĕнчи облаçсем, Атăл лешьенчи облаçсем çине ӳкет. Çав облаçсен тырпул мĕн май килнĕ таран ытларах тумалла, этем вăйĕ çитнĕ таран тата май çитнĕ таран çине тăрса ĕçлемелле. Эпĕ çапла шухăшлатăп: кунта кирлĕ пек ĕçлесессĕн, эпир пурăнма пултаратпăр. Калинин, Ярославль, Мускав, Рязань, Горький облаçĕсем пек облаçсене те, вĕсем тырпул тухăçлăхне ӳстерччĕр, ытларах тырпул паччăр тесе, хистеме тивет. Колхоз стройĕ çакна валли пур майсене те уçса парать. Тырпул тăвассине пирĕн кирек мĕнле пулсан та ӳстермелле. Çакă вăл нимĕçсене çĕнтерессишĕн пыракан пирĕн кĕрешĕвĕн питех те пысăк участокĕ пулса тăрать.

Промышленноçра, çавăн пекех тата ялхуçалăхĕнче те тĕп вăй тенĕ пек,—кирек мĕнле пулсан та халăхăн чи активлă, чи ĕçчен пайĕ хальхи вăхăтра комсомолецсемпе пионерсем пулса тăраççĕ. Вĕсем çине халиччченхинчен чылай пысăкрах ответлăх ӳкет. Ялта 40 çула çитиччченхи çамрăк арçынсем питех те сахал, пуринчен ытларах, ачаллă хĕрарăмсем юлчĕç. Производствăра çитĕнӳсем тăвасси халĕ нумай тĕлĕшпе комсомолран килет. Çавăнпа та комсомол çине пăхасси те улшăнчĕ. Комсомолецсем çине халĕ урăхла пăхмалла, вĕсенчен ытларах ыйтмалла. Çар ретĕнче те комсомол чи активлăрах йыш пулса тăрать. Тĕрĕсссипе илсен, вăрçăн мĕнпур йывăрлăхне сирĕн нумай енчен хăвăрăн тӳссе ирттерме лекет те ĕнтĕ. Сирĕн—пĕтĕм пурнăç умра. Эпир нимĕçсене çапса аркатсан,—эпир вĕсене çапса аркататпăрах,—ишĕлнĕ хуçалăха сирĕн ура çине тăратма, хамăрăн государствăна малалла çирĕплетсе пыма тивет.

Ку вăрçă—пирĕн çамрăксемшĕн сăк та хаяр шкул пулса тăрать. Фашистсем хăйсен çамрăкĕсене хăваласа муштра витĕр кăларнă. Çакă вĕсене дресировка туса хатĕрлеме, дисциплинăна йĕркелесе лартма пулăшрĕ те ĕнтĕ. Паллах, вĕсен дисциплини— механикăллă дисциплина. Паллах, вĕсене аркатма тытăнсан, çав дисциплина хăйĕн тепĕр енне кăтартса парĕ, анчах халлĕхе вăл нимĕçсене пулăшать-ха.

Сирĕн умра, комсомолецсен умĕнче халь мĕнле задачăсем тăраççĕ-ха?

Пĕрремĕшĕнчен, эсир, комсомолец-колхозниксем, пирĕн ялхуçалăхĕшĕн пысăк ответлăх тытнине ăнланса илмелле. Ялта халĕ комсомол организацийĕнчен пысăкрах организаци çук. Комсомолецсем халĕ ĕнтĕ—ĕлĕкхи пек ял тăрăх купăс каласа çӳрекен хавасла ачасем мар, вĕсем çинче вăрçă вăхăтĕнчи ял пурнăçĕшĕн тăрăшас пысăк ответлăх тăрать. Сирĕн халĕ питех те, питех те нумай ĕçлеме лекет-ха. Ĕç мĕнле пынишĕн те, ĕçĕн пахалăхĕшĕн те ответ тытма тивет. Эсир халĕ çитĕннĕ çынсем. Комсомол тĕлĕшпе халиччен пулнă ăнланăва улăштармалла. Комсомол вăл—пурнăçра халăхăн чи ĕçчен пайĕ пулса тăрать, производствăшăн мĕнпур ответлăха вăл хăй çинче тытса тăрать. Начар ĕçлекен колхозра комсомол организацийĕ колхоз хăйĕн обязательствисене пурнăça кĕртменнишĕн мораль тĕлĕшĕнчен пĕтĕм халăх умĕнче, политика тĕлĕшĕнчен центрти оргăнсем умĕнче, парти умĕнче, государство умĕнче пуринчен малтан ответ тытать. Çакна ăна ăнланса илмелле тата çакăнтан хăвăра валли практикăллă выводсем тумалла.

Иккĕмĕшĕнчен, сирĕн ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе—практика енĕпе те, кĕнекесем енĕпе те ытларах пĕлӳ пухмалла, унсăрăн ялхуçалăхне малалла яма çук. Опытлă çынсем ялта сахал, пурте çара кайнă. Колхозпа хальхи вăхăтра пуринчен çирĕпрех, хăйĕн чĕрипе, паллах, комсомол çыхăнса тăрать. Комсомол урăх хуçалăха пĕлмест. Пĕччен хуçалăхăн майĕсем çинчен эсир е илтни тăрăх, е аса илни тăрăх кăна пĕлетĕр. Кивĕ, пĕччен хуçалăх кая юлнă хуçалăх пулнă. Апла пулсан, эсир кирек мĕнле шутласан та, сирĕн ялхуçалăхĕ тĕлĕшпе хăвăрăн опыта пухма лекет. Халлĕхе сирĕн опытпа пĕлӳлĕх сахал, вĕсемсĕр вара колхоз малалла каяймасть. Сирĕнтен, инженерсем, техниксем, врачсем пулас килет, е администраци, политика енĕпе должноçсем йышăнас килет. Анчах халĕ государствăна çăлса хăварасси пирки, унăн никама пăхăнманлăхне çăлса хăварасси пирки ыйту тăрать. Эсир хуçалăхшăн ответлă пулса тăратăр. Апла пулсан, чи малтан, тăван çĕршывшăн ăçта ытларах кирлĕ, çавăнта ĕçлемелле. Сирĕн хăвăртрах опытлă çынсем, ĕçĕн хуçисем, колхоз производствине пĕлекен хуçасем пулса тăмалла. Агроном çук—унăн вырăнне йышăнмалла. Колхозăн кашни организацийĕнче хуçалăхăн пĕр-пĕр енне—уйхир ĕçне, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тĕплĕн тĕпчесе вĕренекен çынсем пулччăр, вĕсем вăйлă тухăçлă тырпул, пахча-çимĕçсемпе çĕрулми, йĕтĕн-кантăр çитĕнтермелли майсем шыраччăр. Çамрăк хĕрарăмсене ĕçе ытларах лартассишĕн тăрăшни кирлĕ.

Виççĕмĕшĕнчен, сирĕн ялта пĕрремĕш организаторсем пулса тăма тивет. Чăн та, ку тĕлĕшпе те сирĕн опыт сахал. Çынсене ертсе пырас тесен, организаторăн мĕн те пулин пĕлмелле. Вунсакăр çулхи хĕре хуçалăха ертсе пыма, паллах, йывăр. Анчах та хатĕр руководительсене пире никам та памасть. Чи тĕрĕсси—ертсе пырас ĕçе организаторла талант, организаторла хастарлăх палăракан çынсене хăюллăнрах уйăрса лартмалла.

Пирĕн çамрăк партизанкăсем пур. Вĕсене йывăр лекет. Анчах та вĕсем хăйсен хастарлăхне, организованноçне, вăрçăри пысăк чеелĕхне кăтартса параççĕ тата арçынсенчен пĕре те начар мар кĕрешеççĕ. Партизанла кĕрешӳ вăл—колхозра ĕçлессинчен темиçе хут йывăртарах. Партизанăн вăрçăри тактикăллă задачăсене татса пама лекет, унăн тăшманран чеерех пулмалла. Çапах та пирĕн партизансем хушшинче хĕрарăмсем чылай. Ялхуçалăхĕнче те ертсе пыракан ĕçе куçарма ăслă-тăнлă хĕрсем сахал мар тупăнаççĕ пулĕ тесе шухăшлатăп эпĕ. Вĕсене шырамалла, çĕклемелле.

Пирĕн хăш чухне çапла пулать: ларать çын руководствăра, ун çинчен—ни пулă, ни какай тесе калаççĕ. Çавнашкал çынăн ĕçре хастарлăхĕ те, чунĕ те çук. Унăн пĕр тивĕçлĕх кăна—вăл çулланнă çын. Çавнашкал çынсем вырăнне çамрăк çынсене хăюллăнрах лартмалла та ĕнтĕ—ан тив, комсомолец ĕçе тытса пытăр. Çакă вăл сирĕн хуçалăх организаторĕсем пулса тăма кирлине пĕлтерет те ĕнтĕ.

Юлашкинчен **тăваттăмĕш** задача—халăх хушшинче политикăллă ĕçе туса пырасси. Вăрçă йывăрлăхĕсем, вĕсем ялта та туйăнаççĕ. Комсомолăн тухмалла та ĕнтĕ кунта, вăрçă йывăрлăхĕсене эпир туманнине, çав йывăрлăхсене пире тăшман кӳнине, кашни колхозникăн яланах пĕтĕм вăя хурса мобилизациленсе ĕçлеме кирлине çынсем ăнланса илччĕр тесен, çав йывăрлăхсем мĕнрен килнине комсомолăн ăнлантарса памалла. Эпир çав йывăрлăхсене çирĕппĕн тӳссе ирттерсе çĕнтермесен, нимĕçсене çапса аркатмасан, питĕ хăрушла чуралăха кĕрсе ӳкме пултаратпăр. Вара ун чухне мăшăрсемпе аттесене тата тăвансене кĕтсе илеймĕпĕр кăна мар, пирĕн пĕтĕм пурнăç та ылханлă пулса тăрĕ.

Юлашки 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 26-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Туапсерен** çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Октябрĕн 25-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 12 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, чугунçулпа пыракан эшелона çĕмĕрнĕ, боеприпассен икĕ складне тата горючи тытакан склада сирпĕнтерсе янă, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Флот авиацийĕ Финн заливĕнче противникăнне пурĕ 12.000 тонна водоизмещениллĕ икĕ транспорт путарнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсем тăвакан атакăсене сирсе тăнă. Заводсен районĕнчи Н-ски часть хӳтĕлекен участокра гитлеровецсен пысăк вăйĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Пилĕк сехет хушши хаяр çапăçу пынă. Нимĕçсем пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕрсе кайнă. Вара пирĕн боецсем противника флангсенчен пырса çапнă та, ăна лӳчĕркесе тăкнă, нимĕçсен каялла чакма лекнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 3 танкне, 9 минометне, 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 750 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре чылай участоксенче çапăçусем малалла пулса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен пехотине 3 ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 противотанковăй тупа персе çĕмĕрнĕ, 4 дзота, 10 блиндажа тата пулеметсен 15 точкине пĕтерсе тăкнă.

Сывлăшри çапăçусенче, противникăн аэродромĕсем çинче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 9 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн часть противника атакăланă та малалла кайнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен çӳллĕ сăрт-тусем хушшинче çапăçма хатĕрленĕ 1-мĕш уйрăм батальонĕнчен тыткăна илнĕ салтаксем çапла каласа панă: батальон составĕнче 1.400 салтакпа офицера çити пулнă, юлашки çапăçусенче батальонри салтаксемпе офицерсем 1000 çынна яхăн вилсе пĕтнĕ е аманнă.

* * *

Воронеж районĕнче Дон шывĕн хĕвеланăç хĕрринче лейтенант Каныгин командир пулса тăракан подразделенин боецĕсем противникăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕрсе кайнă та вĕсенче çирĕпленсе ларнă. Гитлеровецсем çав лайăх рубежа каялла тавăрма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах вĕсене пулеметсемпе персе кăшнинчех пысăк çухатусем кӳрсе каялла сирсе янă. Венгерсен 12-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен 8 салтак Хĕрлĕ Çар енне каçса парăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем икĕ кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 3 противотанковăй тупă тата 8 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă. Флот чаçĕсенчен пĕрин снайперĕсем иртнĕ кун хушшинче 48 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугунçул станцинче вырнаçса тăнă нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем гитлеровецсем пурăнакан казармăна çунтарса янă. Çапăçура 55 оккупанта вĕлернĕ.

Калинин облаçĕнче кĕрешекен партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен колоннине тапăннă. Партизансем нимĕçсен 20 салтакне вĕлернĕ, пĕр станковăй пулемет тата 8 винтовка тытса илнĕ. Çав отрядри партизансен тепĕр ушкăнĕ Германие выльăх-чĕрлĕх турттарса каякан поезда ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Воронеж фронтĕнче кĕрешекен Н-ски чаçри разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче пулнă. Разведчик-красноармеец Кирюшин юлташ гитлеровецсен çавтери тискер ĕçĕсем çинчен каласа панă: «Курск облаçĕнчи Ивановка ялĕнче нимĕçсем пĕр чиркĕве тыткăна лекнĕ красноармеецсемпе мирлĕ халăха мĕн пурĕ 115 çынна хупса питĕрсе илнĕ. Йывăр аманнă красноармеецсене те пулин медицина пулăшăвĕ паман. Чиркĕве хупса лартнă совет гражданĕсене нумай кун хушши пĕр тĕпренчĕк çăкăр, нимле урăх апат та паман. Кĕске вăхăтрах выçăпа е аманнипе 28 çын вилсе кайнă. Вĕсен виллисене никам та илсе тухман. 15 кун çитсен мĕн пурĕ те темиçе çын кăна чĕрĕ тăрса юлнă».

Октябрĕн 27-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче вăйлă çапăçусем малалла пулса пынă. Хулан çурçĕр пайĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сирсе пăрахнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 6 танкне тата противникăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем нимĕçсен 305-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи ротăсенче пĕтĕмпе те 20—30-шар салтак çеç тăрса юлни çинчен, ыттисем юлашки çапăçусенче вилсе е аманса пĕтни çинчен пĕлтернĕ. Хулан кăнтăрти хĕрринче пирĕн чаçсем, гитлеровецсене хирĕç контратака туса, пулеметсен 10 точкине пĕтерсе тăкнă, 26 дзотпа блиндажа çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен пехотине 4 рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникпа çапăçнă. Противник çав участокра пысăк çухатусем тӳсет. Пирĕн пĕр пехотнăй часть кăна 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 6 танкне çунтарса янă, 4 орудине тата 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн чаçсене, малтанхи кун халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕскерсене, темиçе хутчен те атакăланă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Пирĕн летчиксем противникăн 80 çити автомашинине пĕтерсе тăкнă, сывлăшри çапăçусенче 5 самолет персе антарнă тата нимĕçсен 2 самолетне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн атакисене сире-сире янă. Пĕр участокра пирĕн подразделенисем пĕр высотăна, тактика тĕлĕшĕпе паллă вырăн йышăнса тăраканскерне, йышăнса илессишĕн çапăçаççĕ. Лейтенант Магзахвелидзе юлташ ертсе пыракан автоматчиксем 60 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем, противника атакăласа, малалла куçнă та хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Çав операцире нимĕçсенне 9 пулемет, 50 автомат, 100 ытла винтовка тата боеприпассем чылай тытса илнĕ. Завалышев сержантăн оруди расчечĕ орудирен персе, нимĕç миномечĕсен икĕ батарейине пĕтерсе тăкнă, противникăн кавалери эскадронне сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ. Красноармеец Луценко юлташ винтовкăран персе нимĕçсен истребительне ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче артиллеристсем хире-хирĕç сайран персе тăнă. Романов лейтенант командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем нимĕçсен дзотне, 2 станковăй пулеметне çĕмĕрнĕ тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Бронебойщик Вязов юлташ противотанковăй пăшалпа персе противникăн автоцистернине вут тивретнĕ. Снайпер Руденко юлташ юлашки кунсем хушшинче 34 гитлеровеца вĕлернĕ. Красноармеецсем Рубич тата Космаков юлташсем 5-шер нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Ленинград партизанĕсен ушкăнĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен эшелонне сирпĕнтерсе янă. Танксем тиенĕ 6 платформăна тата горючи тултарнă цистернăна çĕмĕрнĕ. Партизансен тепĕр ушкăнĕ чугунçула пăсса тăшманăн дрезинине ӳпĕнтерсе янă. Тепĕр темиçе кун иртсен партизансен çав ушкăнех тăшманăн боеприпассем турттарса пыракан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушенире вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Противникăн тылĕнчен таврăннă партизан Владимир Н. çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть манăн Орел облаçĕнчи Журиничи, Бугры тата ытти ялсенче пулма тӳрĕ килчĕ. Çав ялсенче çирĕп те чечекленекен колхозсем пулнă. Нимĕçсем çав ялсене тĕппипех çунтарса янă. Сывлăш Флочĕн ячĕпе тăракан колхозра пурăнмалли пĕр çурт та, пĕр хуралтă та юлман. Колхозниксем хăйсемех виçĕ сарай тунă та, унта ялти пĕтĕм халăх—хĕрарăмсемпе ачасем 76 çын вырнаçнă. Гитлерла мерзавецсем çавăн çинчен пĕлсенех, хĕрарăмсемпе арçынсене пĕр сарайне хăваласа пухнă та пурне те автоматсемпе пере-пере вĕлернĕ. Тепĕр кунне эпир çав ял витĕр тухрăмăр. Йĕри-тавра хăрушла шăплăх. Сарайĕнче эпир çав тери тискер картина куртăмăр. Юн кӳлленчĕкĕсенче таптаса лӳчĕркесе пĕтернĕ çынсен 75 вилли йăваланса выртать. Пĕр виçĕ çулхи хĕрача кăна тепле майпа чĕррĕн çăлăнса юлнă. Эпир ăна хамăрпа пĕрле илтĕмĕр те пăхса ӳстерме совет патриочĕсен аллине патăмăр».

* * *

Норвеги партизанĕсен отрячĕ, Финмаркен провинцийĕнче (Çурçĕр Норвегия) кĕрешекенскер, нумаях пулмасть пĕр çула пӳлсе лартнă. Нимĕçсен автоколонни çав тĕле çитсе ирĕксĕрех чарăнса ларсан, Норвеги патриочĕсем пулеметсемпе пеме пуçланă та 27 оккупанта пĕтерсе тăкнă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Ленинград фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** Саперсем боевой задание пурнăçлама шыв урлă каçса каяççĕ. Малти—Е. Гайдуков сержант.

Б. ЛОСИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Моздок районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 25-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Моздок районĕнче вырăнти çапăçусем пыраççĕ. Совет войскисем иртнĕ çапăçусенче чылаях юнсăрлатса хăварнă нимĕçсем васкасах оборона рубежĕсене çирĕплетеççĕ, пехотăпа танксен резервĕсене илсе пыраççĕ, хăйсен вăйĕсене çĕнĕрен пухса йĕркелеççĕ.

Участоксенчен пĕринче тăшманăн пĕр ушкăнĕ пирĕн батальон хӳтĕлекен оборона ăшне кĕме хăтланса пăхнă. Совет боецĕсем гитлеровецсене 50—60 метр таран çывăха янă та пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн персе вĕлерме тытăннă. Хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсене нумай çухатнă хыççăн, нимĕçсем каялла хăйсен малтанхи позицийĕсем патнех чакнă.

Хавроничев сержантăн отделенийĕ вырнаçса тăракан çĕре нимĕçсен 30 автоматчикĕ пырса кĕме хăтланнă. Кĕçĕн командир пулемет тытнă та тĕл персе 15 гитлеровеца вĕлернĕ. Тизибаев красноармеец, маларах тухса пеме лайăх позици йышăннă та, винтовкăпа персе 5 автоматчика вĕлернĕ. Тепĕр участокра Горьков командирăн расчетĕнчи минометчиксем нимĕçсен станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 20 автоматчикне вĕлернĕ.

Гитлеровецсене Н-ски чаçăн боецĕсем вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Пĕр кун хушшинче кăна вĕсем румынсен горнострелковăй дивизийĕнчи салтаксемпе офицерсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Гитлеровецсем вырăс хĕлĕ çитессинчен хăраççĕ. Нимĕçсен артиллерин 198-мĕш полкĕнчен тыткăна илнĕ ефрейтор Карл Эрих Бебек çапла каласа панă: «Салтаксем çакна лайăх пĕлеççĕ: вăрçă ку çулта пĕтес çук, мĕншĕн тесен вырăссем питĕ вăйлă. Салтаксем сывхарса килекен хĕл çинчен час-часах калаçма пуçларĕç, хĕл кӳрекен калама çук пысăк йывăрлăхсем вĕсене хăратаççĕ. Пуринчен нумай ун çинчен 1941—42 çулти хĕле тӳссе ирттернĕ салтаксем калаçаççĕ. Пĕр-пĕр ротăри çухатусем çинчен пĕлсен; салтаксем нумайĕшĕ уçсăнах çапла калаççĕ: «Ку вăл çынсене усăсăр пĕтерни кăна пулать. Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра Германа çиеле тухайрас çук», — теççĕ».

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Михаил Иванович Калинин тухса калани

(Юлашки. Пуçламăш 1-мĕш страницăра).

Комсомол пурнăçра çамрăксен чи ĕçчен те хастарлă тата чи тӳрĕ тĕллевлĕ пайĕ пулма тивĕçлĕ, унăн тĕллевĕ пĕрре кăна—тăшмана çапса аркатасси. Пире нимĕнле жертвăсем те чарса тăма пултараймаççĕ. Пирĕн пур жертвăсене те тӳссе ирттермелле, çĕнтерме мĕн кирлине пурне те тумалла.

Сирĕн умра халĕ мĕнле пысăк задачăсем тăнине эсир куратăр. Апла пулсан, комсомолăн йышне ӳстермелле. Комсомол ретне фронтра красноармеецсене илнĕ пек илмелле. Фронтра красноармеец устава пĕлнине ыйтмаççĕ, истори пĕлнине ыйтмаççĕ. Вăл нимĕçсене çирĕппĕн çапать пулсан—вăл вара комсомолпа партие кĕме чи лайăх кандидат. Пирĕн çакăн пек хĕрсем пур, вĕсем пирĕн ĕçе тăваççĕ, илсе тух вĕсене пухăва—вĕсем çухалса каяççĕ, пĕр сăмаха тепĕр сăмахпа çыхăнтараймаççĕ. Анчах вĕсемпе уйрăмăн калаççан—вăл пĕре те начар çын маррине, чăн-чăн пирĕн çын пулнине куратăн. Анчах вăл именекен çын, çавăнпа çухалса каять те вăл. Ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене сирĕн комсомол ретне хăварăн суйласа илмелле.

Чăн та, çакнашкал çамрăк çынсем те пур: ĕçлессе вĕсем аван ĕçлеççĕ, анчах çав вăхăтрах, калăпăр, кĕлте çыхнă чухне урăх çынăн чапне хăйсем çине илме хăтланаççĕ. Е тата тултан пăхсан вăл лайăх çын, анчах тĕрлĕ ырă мар меслетсемпе çиеле тухма тăрăшать. Çавнашкал çынсене комсомол ретне илессинчен эпĕ тытăнса тăнă пулăттăм. Каппаяссишĕн тӳрĕ мар меслетсемпе усă куракан çынна организацие кĕртни нимĕн тума та кирлĕ мар. Çавнашкал çынсен комсомолра ĕç çук.

Хăшĕ-пĕрисем комсомола карьера тăвассишĕн кĕреççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ комсомол ретне ушкăнпа илме юрамасть, çавăн пекех тата юри чарса тăма та кирлĕ мар. Пачах та урăхла, çынсем çакна туйса тăччăр: комсомола кĕме юрать, унта кĕме вĕсемшĕн алăк анлăн уçăлнă. Хăвăр ялти çынсене эсир пурне те пĕлетĕр. Çемьесенчен чылайĕшĕсем пирĕн—лайăх çынсем. Лайăххисене илсе комсомола вăйлатмалла та ĕнтĕ. Ялта комсомолецсем 6—8 çын пулни сахал. Ялта сахалтан та 20 комсомолец пулмалла. Комсомола кĕрессине çăмăллатмалла, комсомола кĕме çунакансем сирĕн яланах йышлăн пулччăр.

Çапла ĕнтĕ, юлташсем, эпĕ хам мĕн калас тенине пĕтĕмпе тенĕ пекех калярăм. Эпĕ кунта каланă ыйтусем вĕсем сирĕншĕн çĕнĕ мар. Çапах та вĕсене сирĕн ертсе пырас ĕçре йышăнма лекет, вăрçă вăхăчĕ лартакан требованисене, эпĕ кунта каланисене, ăнланса илсе пурнăçа кĕртме тытăнмалла пулать. Çакна асра тытăр: ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳ—вăл аслă вăрçăри чылай пысăк çапăçура çĕнтерни пулать. Ялхуçалăхĕнче çĕнтерӳ тăвассишĕн эсир, комсомолецсемпе комсомолкăсем, ответлă пулса тăратăр.

Сире хăварăн ĕçре çитĕнӳсем тума сунатăп. Хăçан та пулин татах та тепĕр хут тĕл пулма тӳрĕ килсен, колхозри комсомол организацийĕ çирĕпрех пулнине курма, комсомол организацийĕ ялта татах та боевойрах политикăллă организаци пулса тăни çинчен илтме кăмăл пур. Комсомол—пысăк вăй пулса тăнине ял татах та çирĕпреххĕн туйса илтĕр.

21 колхозник преми илме тивĕçлĕ пулчĕç

Районри ялхуçалăх выставкинчен

ИЕПРЕÇ. Октябрĕн 25-мĕшĕнче районра ялхуçалăх выставки уçăлчĕ. Выставка районри колхозсем отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тунă çитĕнӳсене кăтартса парать.

Вăрçă условийĕнчи йывăрлăхсене большевикла çĕнтерсе пырса, районри чылай колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул, пахча-çимĕç туса илчĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Районри ялхуçалăх выставки вăл çитĕнӳсене, малта пыракан колхозсен ĕç опытне кăтартса парать.

«Красный фронтовик» колхоз кăçал 38,6 гектар çинче вăтам шутпа кашни гектартан 117-шер пăт кĕрхи тулă туса илчĕ. «Молния» колхозăн Ермолаев юлташ ертсе пыракан бригади кашни гектартан 400 центнер купăста, 137 центнер сухан туса илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхсен хисепне, вĕсен продукчĕсене ӳстерес тĕлĕшпе те районри чылай колхозсем паха ĕçсем турĕç. «Молния» колхозăн ĕне фермине кăçал кашни фуражлă ĕнерен октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1.700-шер литр сĕт суса илнĕ, çамрăк пăрусене пурне те лайăх пăхса ӳстернĕ. «Чувашия» колхозăн сысна ферминче пысăк тупăш паракан ăратлă сыснасем ĕрчетеççĕ. Чылай сыснасен чĕрĕ виçийĕ 180 килограмран иртет. Кашни ама сыснаран кăçал вăтам шутпа 18-шар çăвăр илнĕ, вĕсене пурне те пăхса ӳстернĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес, фронтпа çĕршыва нумайрах тырпул, аш-какай, çăм, сĕт-çу туса парас тĕлĕшпе кăтартуллăн ĕçлекен колхозниксене выставка комитечĕ премисем пачĕ. Преми илме пурĕ 21 колхозник тивĕçлĕ пулчĕç.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ют çĕршывсенче

Китайăн нациллĕ-политикăллă совечĕн сессийĕ

ЧУНЦИН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Чунцинра Китайăн нациллĕ-политикăллă совечĕн черетлĕ сессийĕ уçăлнă. Сессие 200 çын ытла пухăннă. Сессире Чан Кай-ши тата Китай республикин президенчĕ Лин Сэнь сăмахсем тухса каланă. Сесси чылай докладсем, вăл шутра финанс министрĕн Кун Сян-си тата халăх хуçалăх министрĕн Вэн Вэн-Хао доклачĕсене итлерĕ. Финанс министрĕ Кун Сян-си: Финанс министерстви вăрçă тата хуçалăх строительстви кăларса тăратнă пысăк требованисене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçленĕ, тесе палăртнă. Предприятисене урăхлатса çĕнетес, культурăна аталантарас, халăха сутта кăларас тата социальнăй ĕçсем валли тухакан расходсене иртнĕ çулхипе танлаштарсан чылай ӳстернĕ.

Халăх хуçалăх министрĕн Вэн Вэнь-Хао докладĕнче иртнĕ çулта Китайăн оккупациленмен пайĕнче вăрçă нуşисене тивĕçтерсе пырас тĕлĕшпе ĕçлекен нумай предприятисене туса лартнине кăтартса панă. Китайăн сурçĕр-хĕвеланăçĕнчи провинцийĕсене аталантарас ĕç çине, уйрăмах çав районри ресурсемпе усă курасси çине, правительство тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Министр çакна палăртнă: юлашки çул хушшинче Китайра çăмăл промышленноçăн 206 предприятине юсаса ĕçе янă тата çĕнĕрен тунă. Топливо промышленноçне аталантарасси çинчен чарăнса тăрса, Вэн Вэнь-Хао çапла каланă: Китайăн оккупациленмен пайĕнчи 15 хулара 15 электростанци ĕçлет. Çĕркăмрăк промышленноçĕ хăвăрттăн аталанса пырать.

Китайăн нациллĕ-политикăллă совечĕн ларăвĕнче Чан Кай-ши тухса каланă сăмах

ЧУНЦИН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Китайăн нациллĕ-политикăллă совечĕн ларăвĕнче Чан Кай-ши сăмах тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: иртнĕ çул хушшинче Китайра пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн Китай войскисем оборонăран наступление куçнă, генеральнăй контрнаступлени тума хатĕрленес тĕлĕшпе те Китай, çавтери пысăк йывăрлăхсем тĕл пулнине пăхмасăрах, палăрмалла результатсемех тунă. Чан Кай-ши çав мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерме халăхăн хăватне май килнĕ таран ытларах пухма чĕннĕ. Çак вăрçăра çĕнтересси, — тенĕ вăл, — вăрçă операцийĕсенчен кăна мар, çавăн пекех тата экономика мĕнле пулнинчен те килет. Çав вăхăтрах çĕнтерӳ тума Китайра халĕ мĕнпур ресурссене пĕтĕмпех мобилизациленмен-ха. Çавна май, — тесе пĕлтернĕ Чан Кай-ши, — «нациллĕ экономикăна çирĕплетес тесе тата мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерес тесе, правительство çĕршывăн ресурсĕсене пĕтĕмĕшлĕн мобилизациленессине пурнăçа кĕртме, экономикăна пур енĕпе те контроль туса пырассине пурнăçа кĕртме йышăннă».

Чан Кай-ши çакна палăртнă: японецсем Гонконга тата Бирмăна оккупацинине пула тулашри тĕнчепе çыхăнса тăмалли çулсем пĕтнĕ пулин те, Китай хăйĕн союзникĕсемпе çыхăнса ĕçлесси çирĕпленнĕ. Англипе Америка правительствисем хăйсем Китайра уйрăм территорисем тытса тăмалли правăсене пăрахăça кăларасси çинчен пĕлтернипе Чан Кай-ши питĕ кăмăллă пулни çинчен каланă.

США сеначĕ 18 тата 19 çулхи çамрăксене çара илесси çинчен калакан закон проектне ырланă

ВАШИНГТОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). США сеначĕ 18 тата 19 çулхи çамрăксене çара илесси çинчен калакан закон проектне ырланă. Закон проекчĕ çумне сенат тӳрлетӳсем хушса кĕртнĕ. Пĕр тӳрлетӳре çакна каланă: çав 18 тата 19 çулхи çамрăксене Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен урăх фронтсене яриччен малтан пĕр çул хушши вĕрентес пулать, тенĕ. Представительсен палати ку тӳрлетĕве ырламан-ха. Рузвельт, çар тата тинĕс министерствисем ку тӳрлетӳпе килĕшмеççĕ, ăна хирĕç хăюллăн тăраççĕ. Тата тепĕр тӳрлетӳ пур. Представительсен палати ăна та çавăн пекех йышăнман. Ку тӳрлетӳре çапла каланă: ялхуçалăхĕнче, вăрçă тĕлĕшпе питех те кирлĕ урăх ĕçсенче тăракан рабочисене, вĕсен вырăнне юрăхлă çынсем тупиччен, мобилизацилеме юрамасть, тенĕ.

КВИСЛИНГОВЕЦСЕН ШАЙКИНЧИ ХАРКАШУ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Норвегин информаци бюровĕ çапла пĕлтерет: квислинговецсенчен пĕр пайне Совет Союзне фронта яма мобилизациленĕ пирки квислинговецсен лагерĕнче хирĕçӳ-харкашу ӳссе пырать. Квислинговецсем фронта ярассинчен питĕ хăраççĕ, вĕсем призыв пункчĕсене каяссинчен тĕрлĕ майпа хăтăлса юлма тăрăшаççĕ. Нумаях пулмасть квислинговецсен пропаганда отделĕн руководителĕ Корсики çапла каланă: «Хĕвелтухăç фронтне яни çынсене пĕре те хавхалантармарĕ», тенĕ. Вăл çакăн пирки ӳпкелешсе каланă: мобилизациленисем «фронта каяссинчен тĕрлĕ майпа пăрăнса юласшăн, вĕсем çапăçма хăйсене янă пирки, Норвегире пĕтĕмĕшле мобилизаци туман пирки ӳпкелешеççĕ». Квислинговецсен чиновникĕ каланă тăрăх, мобилизаци тума «май çук, мĕншĕн тесен норвежецсене пăшал пама хăрушă».

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ЧЕХОСЛОВАКИРИ ЮНЛĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсем Чехословаки халăхне малалла вĕлерсе пыраççĕ. Шкодăн пысăк çар заводĕнчи цехсенчен пĕринче ĕçлекен рабочисене пурне те вĕсен çемьисемпе пĕрлех персе пăрахнă. Литовăри авиаци заводĕнче ĕçлекен кашни вунă рабочирен пĕрине концентрациллĕ лагере ăсатнă. Тепĕр темиçе кун иртсен вĕсен çемьисене çунтарса янă рабочисен кĕлне тултарнă урнăсем пырса панă. Çав урнăсем çумне ирсĕррĕн мăшкăллакан çырусем çырса çыпăçтарнă.

БЕЛЬГИРЕ ГИТЛЕРА ХИРĔÇЛЕ САБОТАЖ ТĂВАÇÇĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Брюссельри радио пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Нев-Капельре взрыв пулнă. Темиçе нимĕç вилнĕ. Курсельри авиаци заводĕнче саботаж тунă пирки взрыв пулнă. Жилли хулинче Бельги фашисчĕсем йышăнса тăракан çурта бомба пăрахнă.

Англи авиацийĕ Милана тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 24-мĕшĕнче кăнтăрла «Ланкастер» бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ Миланри промышленность объекчĕсене тапăннă. Хулара пушарсем нумай тухнă. 1,6 тонна туртакан пĕр бомба пысăк завода лекнĕ.

Октябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, Милана кăнтăрла тапăнни темиçе сехет иртсен, Англи бомбардировщикĕсем çав хулари темиçе объекта тепĕр хут атакăланă тата Çурçĕр Германири тĕрлĕ пунктсене атакăланă.

Югославири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Бернри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин Югославири войскисен командующийĕ генерал Бадер Югославире вăрçăллă лару-тăру туса хунă, ăна «Белградра восстани тума хăтланнине пĕлнĕ» пирки тунă.

—О—

Пĕлтерӳ

Кăçалхи октябрĕн 30-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре Советсен çурчĕн ларусен залĕнче докладчиксемпе агитаторсем валли

Октябрьти Социализмлă аслă революци 25 çул тултарни

темăпа инструкциллĕ доклад пулать.

Докладчикĕ—ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ **М. Андреев** юлташ. **ВКП(б) Горкомĕ.**

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Уяв ячĕпе илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртрĕмĕр

Аслă Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, пирĕн цех коллективĕ çак уйăхри производство планне срокран эрне малтан тултарма пулнăччĕ. Панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕмĕр: октябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне уйăхри плана 101 процент тултартăмăр. Халĕ заданисене мĕн пур номенклатурăсем енĕпе ирттерсе тултарассишĕн ĕçлетпĕр.

Çак уйăхри ăмăртура пирĕн цех коллективĕ хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатса тикĕслетрĕ. Мастерсем Каневский, Малыхин тата Бубликов юлташсем хăйсен участокĕсене пултаруллă ертсе пыраççĕ, графика тĕрĕс те тикĕс пурнăçласа пыраççĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртура пирĕн рабочисемпе работницăсен ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ. Стахановкăсем Люминарская, Завадовская тата Антонова юлташсем хăйсен нормисене кашни кун 250 процент тултараççĕ. Хренова, Григорьева тата Тоничкина сборщицăсен ĕç тухăçлăхĕ те нормăран 2 хут пысăкрах.

Заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне пирĕн коллектив виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ хăйĕн аллинче тытать.

А. КИНЗБУРГСКИЙ.
Н-ски заводри цех начальникĕ.

Пĕтĕм вăя—кĕрхи çĕртме тунă çĕре

СЕНТЕРВĂРРИ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕрхи çĕртме сухине тăвас вăхăт иртсех пырать. Уяр çанталăкăн кашни сехечĕпе туллин усă курса, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе халь пĕтĕм вăя хумалла. Çак 5—6 кун хушшинче пур колхозсен те кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçламалла. ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхоз председателĕсене пухса ĕнер ирттернĕ канашлура кĕрхи çĕртме сухине тăвас ыйтăва çакăн пек лартрĕç те ĕнтĕ.

Канашлу «Красный Волгарь» колхоз председателĕ Шмелев, «Пищевик» колхоз председателĕ Волков, «Трактор» колхоз председателĕ Николаев юлташсен отчечĕсене итлерĕ. Вĕсен отчетĕнчен юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç колхозсенче вăйланса пыни курăнать. «Красный Волгарь» колхозăн кăçал кĕрхи çĕртме сухине 280 гектар туса хăвармалла, октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне 153 гектар сухаланă. Унчченхи кунсенче сухара 26 лаша ĕçленĕ пулсан, октябрĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа кулленех 32 лаша ĕçлет. Апла пулин те, кĕрхи çĕртме тăвас ĕç колхозра халĕ те вăрахăн пулса пырать-ха. Ĕç тухăçлăхĕ начар. Октябрĕн 26-мĕшĕнче 32 лашапа 12 гектар çеç сухаланă.

«Пищевик» колхозăн та кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. План тăрăх кăçал 115 гектар сухаласа хăвармалла пулсан, ĕнерхи куна колхоз 53 гектар çеç сухаланă. Районĕпе октябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртме тумалли плана 68 процент пурнăçланă, 5 колхоз кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе тĕпренех вăйлатмалла. Нумай колхозсенче суха тума ирхине 9—10 сехетре çеç тухаççĕ. Çак çитменлĕхе халех пĕтермелле. Суха ĕçне халь уйăх çутиллĕ каçсемпе усă курса, ирхине 5—6 сехетре тухмалла тăвас пулать. Лашасене улăштарса ĕçлесе, ĕç кунĕн кашни сехечĕпе туллин усă курас пулать. Сухаçăсем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле. Çапла ĕçленипе кĕрхи çĕртме сухине çак 5—6 кун хушшинчех ăнăçлăн вĕçлемелле, çакăншăн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес пулать.

С. ЖЕЛЕЗКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсен кăçал кĕрхи çĕртме сухине 9.000 гектар çинче туса хăвармалла, Ку вăл — çĕршывпа фронтăн заданийĕ. Ăна кашни колхозăн пурнăçламалла.

Анчах та Красноармейски районри çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсемпе МТС руководителĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре колхозсене япăх ертсе пыраççĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ку тĕлĕшпе панă кăтартусене район питех те начар пурнăçласа пырать. Кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунлăх графикĕсене район тăтăшах пурнăçласа пымасть, çак ĕçре ĕçлемелли лашасене паянхи кун та уйăрса çитермен. Çавăн пекех районри машинно-тракторнăй станци те кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе ĕçре нимĕнле улшăнусем те туман.

Октябрĕн 23-мĕшĕ тĕлне кĕрхи çĕртмене районра пурĕ те 3.235 гектар çинче çеç тунă. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăтартса панă тăрăх, сухара кулленех 1.922 лаша ĕçлемелле, анчах пĕр кун та 400—500 лашаран ытла ĕçлени пулман. Кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçа кĕртме районăн услови çук мар, пур. Хăшпĕр колхозсенче ку ĕç организованно пулса пырать. Янчеллă ялсоветĕнчи «Победа» колхоз (председателĕ Федоров юлташ) кĕрхи çĕртме тумалли плана 108 процент тултарнă, «Красное Сормово» колхоз çĕртме сухине 273 гектар çинче тунă, çавăн пекех «Красная Чувашия» колхоз та плана ăнăçлăн тултарнă. Ку колхозсен кĕрхи çĕртме тумалли условисем ытти колхозсенчи пекех, анчах вĕсем кĕрхи çĕртме тырпулăн тухăçне нумай хăпартнине шута илсе, ку ĕçе пысăк вăй хураççĕ, ответлăха туйса ĕçлеççĕ.

Кунта ик-виçĕ кун хушши тăпра шăннипе кĕрхи çĕртме сухине лашасемпе тума май пулмарĕ. Анчах сухана тракторсемпе ăнăçлăнах тумалла. Тăпра пĕр хушă шăнса тăнипе — халь ĕнтĕ кĕрхи çĕртме тăвасси кая юлчĕ, тесе ĕçе чарса лартсан, эпир пысăк йăнăш тăватпăр. Çĕр пичĕ шăнсах ларса хĕл пулас вăхăт çитмен-ха. Кĕрхи çĕртмене лашасен вăйĕпех ăнăçлăн тумалли кунсем татах пулмалла. Çавăнпа пур колхозсен те ку ĕçре кашни сехетпа усă курас пулать. Кĕрхи çĕртме планне кашни колхозăн ăнăçлăн пурнăçламалла. Çакна пирĕнтен фронт ыйтать.

С. ШАДИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çĕмĕрле районĕнчи парторганизацин пухăве

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Октябрĕн 24—25-мĕшĕсенче коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) райкомĕн иртнĕ суйлав пухăвĕнчен пуçласа паянхи куна çитиччен тунă ĕçсем çинчен отчет итлерĕç, ВКП(б) Çĕмĕрле райком пленумĕн составне суйларĕç. Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ Григорьев юлташ отчетлă доклад турĕ.

Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçласа, районри парторганизаци хăйĕн пĕтĕм ĕçне фронтпа тăван çĕршыва вăйлăн пулăшас тĕллевпе туса пырать. Григорьев юлташ хăйĕн отчетĕнче парторганизацин отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинче ытларах чарăнса тăчĕ. Партин пуçламĕш организацисенчен нумайĕшĕ агитаципе массăллă ĕçе хуçалăхри ĕçсемпе лайăх çыхăнтарса туса пыраççĕ. Районри хăшпĕр предприятисемпе артельсем тата колхозсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Механизациллĕ арман, торф кăларакан предприятисем производствăн çулталăкри планне 9 уйăх хушшинче пурнăçланă. Рабочисемпе работницăсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва вăйлатса пыраççĕ.

Районри колхозсем çуракине тата тырпулсене уйхирсенчен пухса кĕртес ĕçе кĕске вăхăтра ăнăçлăн вĕçленĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарнă. Чылай колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене фронт ыйтнă пек пысăк хăвăртлăхсемпе туса пыраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Первое Мая» колхозсем авăн çапса пĕтернĕ, кĕрхи çĕртме тумалли плана пурнăçланă, государство умĕнчи пур обязательствăсене те парса татнă.

Анчах та районри предприятисемпе артельсенче, колхозсенче, çавăн пекех хăшпĕр парторганизацисен ĕçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар-ха. «Большевик» завод хăйĕн производство планне пурнăçламан. Завод хăйĕн оборудованийĕпе туллин усă курмасть, рабочисемпе работницăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса пымасть. Заводри пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Конюхов юлташ хуçалăхри ĕçсемпе пачах интересленмест, агитациллĕ ĕçе те кирлĕ пек туса пымасть. Çавăн пекех районри промкомбинат, апатçимĕç хатĕрлекен комбинат тата Ширшов ячĕпе тăракан, «Красный Октябрь» промартельсем производство планĕсене тултарса ĕçлемеççĕ. Промкомбинатăн 53 тĕслĕ продукци кăлармалла пулсан, паянхи куна 15 тĕслĕ продукци çеç кăларать. Социализмлă ăмăртăва тивĕçлĕн çĕклесе пыманнипе пула, кунта стахановла ĕçлекен рабочисен йышĕ 8 процент çеç. ВКП(б) райкомĕ те районри промышленность предприятийĕсемпе артельсен ĕçĕпе сахал интересленнĕ, конкретно ертсе пыман.

Çакăнпа пĕрлех ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартса пыракан патриотсене парти ретне илес ĕç те çителĕксĕр пулса пынă. Иртнĕ суйлав пухăвĕнчен вара районри парторганизаци хăйĕн ретне çĕнĕрен 79 çынна илнĕ, вăл шутран кандидатсен ретне 36 çынна çеç илнĕ. Парти ретне çĕнĕ членсемпе кандидатсем илес ĕçе Мехлесопунктри, МТС-ри парторганизацисем кирлĕ пек лайăх туса пынă. Çак вăхăтрах малта пыракан рабочисене парти ретне илес тĕлĕшпе Лесхозри, Поликлиникăри, промкомбинатри, Егоркинăри, Турханти пуçламĕш организацисем пачах çителĕксĕр ĕçленĕ. Ку организацисенче парти ретне çĕнĕрен пĕр çынна та илмен.

Пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Крылов юлташ пулчĕ. Вăл пренире тухса каласа промышленность предприятийĕсенчи парторганизацисен ĕçне тивĕçлипе критиклерĕ, вĕсен малаллахи задачисене палăртса хăварчĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ партин пуçламĕш организацийĕсем комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçе çителĕксĕр туса пынине палăртрĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа пуху ВКП(б) районри комитечĕн пленум составне тата ревизи комиссине суйларĕ.

Пуху хыççăн пулнă пленумăн организациллĕ ларăвĕ ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Григорьев юлташа, иккĕмĕш секретарĕ пулма Котлеев юлташа, кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма Борисов юлташа суйласа хăварчĕ.

Х. ЛИСИН.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕМПЕ ТАНЛАШМАЛЛА

ЭЛĔК. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри чылай колхозсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе паха ĕçсем туса пыраççĕ. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать: юлашки уйăх çурă хушшинче районри колхозсем темиçе вуншар пуç ĕне, сурăхсем тата сыснасем туяннă, 2 сысна ферми организациленĕ. Колхозсем хăйсен умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕрне—çĕршывпа фронта ытларах аш-какай парассине — ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмăнах Элĕк ялсовечĕ лайăх ĕçлет. Акă çак ялсовета кĕрекен Жданов ячĕпе тăракан колхозах илер. Ку колхозăн 4 ферма. План тăрăх унăн майракаллă шултăра выльăхсем 30 пуç пулмалла, халĕ 31 пуç пур, сыснасем 55 пуç вырăнне 143 пуç усраççĕ, сурăхсем усрас тĕлĕшпе те плана 100 проценчĕпех тултарнă. Колхоз выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Вăтамран кашни ĕнерен 1.200 литр сĕт суса илмелле пулсан, кунта октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех 1.258 литр суса илнĕ. Ферма заведующийĕ А. Ильина юлташ, иртнĕ çулта плана ирттерсе тултарнăшăн 230 литр сĕт илнĕскер, кăçал та темиçе çĕр литр сĕт илет. Çавăншăн та ĕнтĕ сĕт-çу фермине районри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма палăртнă.

Колхоз лайăх ĕçлени, чăн малтанах, колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ыйтупа куллен ĕçлесе пынинчен килет. Правлени председателĕ Егоров юлташ ку ыйтупа хăй тăтăшах интересленет, фермăсене кайса пăхать, унта ĕçлекенсемпе таччăн çыхăну тытать, çитменлĕхсем тупăнсан çийĕнчех пĕтерме тăрăшать. Ахальтен мар ĕнтĕ колхоз выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес тĕлĕшпе те районра малта пырать. Вăл силос хывас плана 157 процент тултарнă, 1.028 центнер утă хатĕрлес вырăнне 1.115 центнер тата 440 центнер тĕрлĕрен тымар-çимĕçсем хатĕрленĕ. Колхозăн кăçал 222 сысна çăвăрĕнчен пĕрре кăна вилнĕ тата пур выльăхсене те чуптарса хăварнă.

Çак ялсоветĕнчи «Звезда» колхоз та фермăсене пурне те комплектласа çитернĕ. Паянхи куна унăн 45 ĕне вырăнне 60, 40 сысна вырăнне 48 тата 65 сурăх вырăнне 85 сурăх пур. Кăçал пĕтĕмпе те 1 путек çеç вилнĕ. Халĕ пур фермăсем те тенĕ пекех хĕле хатĕрленсе çитрĕç, выльăхсем валли кирлĕ чухлех апат-çимĕç хатĕрлерĕç.

Анчах районра уйрăм колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес тĕлĕшпе япăх ĕçлесе пыраççĕ-ха. Уйрăмах ку енĕпе Татмăш ялсоветĕнчи колхозсем кайра пыраççĕ. Сăмахран, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн план тăрăх 40 ĕне, 90 сысна тата 65 сурăх усрамалла, халĕ пĕтĕмпе те 26 сысна (40 процент!) тата 17 ĕне кăна пур. Вăрманкасри Сталин ячĕпе тăракан колхоз та ĕнесем усрамалли плана 84 процент, сурăхсем енĕпе 87 процент çеç тултарнă. Асăннă колхозсем выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ чухлĕ апат-çимĕç те хатĕрлемен-ха, выльăх витисем те хĕле кĕме хатĕр мар. Çапах колхоз председателĕсем вăл ыйтупа сахал интересленеççĕ, конкретнăй ĕçсем туни çук.

Элĕк районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана октябрĕн 15-мĕшне măйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе—102,9 процент, сыснасем енĕпе 146,5 процент тултарнă. Çав вăхăтрах сурăхсем усрас тĕлĕшпе 96,8 процент çеç тултарнă. Партипе советăн районри организацийĕсен ку кăтарту енĕпе те çитес кĕске вăхăтрах ĕçе лайăхлатмалла. Ăна тума районра пур условисем те çителĕклĕ.

Подразделенире чăвашла хаçат тухса тăрать

Н-ски гвардейски чаçра казах чĕлхипе хаçат тухма пуçланă. Çак хаçатăн пĕрремĕш номерĕнче казах красноармеецĕсен боевой ĕçĕсем çинчен, çавăн пекех фашистсем тыткăна илнĕ боецсене тата мирлĕ халăха тискер кайăкла асаплантарни çинчен каласа кăтартнă. Бобров юлташ командир пулса тăракан подразделенире «Тăван çĕршывшăн» ятлă чăвашла хаçат тухса тăрать. Хаçата питĕ юратса вулаççĕ.

(«Известия» хаçатран).

НАЧАЛО ЗАНЯТИЙ на дневных курсах шоферов в г. г. Чебоксарах и Канаше—2-го ноября.
Управление автотранспорта при Совнаркоме Чуваш. АССР.

Чебоксарской Конторе НКСвязи требуются:
Почтальоны, кочегары, счетоводы, доставщики телеграмм и работники телеграфа.
С предложением обращаться: Дом связи, II-й этаж, отдел кадров, тел. № 2—74.

ЧУВАШДРЕВПРОМСОЮЗУ ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу: финансист, бухгалтер-ревизор, техник-строитель, инженер или техник лесохимии, инженер-механик-энергетик, инженер по механической обработке дерева, механик по газогенераторным установкам и конюх.
Обращаться по адресу: Заводская ул., дом 12.

ЧУВАШСЕЛЬХОЗИНСТИТУТУ ТРЕБУЮТСЯ:
старший лаборант по кафедре организации с/х. производства с высшим агрономическим, зоотехническим образованием, машинистка, столяр, электромонтер и уборщицы.
ДИРЕКЦИЯ.

Сюктерскому деревообделочному заводу требуется гл. бухгалтер, нач. планового отдела, бухгалтер, начальник отдела снабжения. Завод жильем обеспечивает, имеется столовая.
Обращаться: п. Сюктерка, Ишлейского района, к директору или г. Чебоксары, ул. Ленина, 61, Текстильстрой. Тел. 2—98

Пропал жеребец под кличкой «Васька», темно-серой масти, 1939 года рождения, принадлежащий колхозу «Чăваш Коммуни», Чигирского с/совета, Чебоксарского р-на.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л

НТ 11573